Лукка Эрхипӗ. Чаплӑ тӑлмач : [К.В. Иванов ҫинчен] // Чӑваш коммуни. – 1940. – 25 авӑн.

К. В. Иванов юбилейӗ умӗн

# Чаплӑ тӑлмач

Классиксен художествӑллӑ произведенийӗсене, вӗсен илемлӗ сӑввисене вырӑсларан чӑвашла куҫарма пуҫлаканни—К. В. Иванов пулнӑ.

Шупашкарта чӑвашсен наукӑпа тӗпчев институтӗнче Чӗмпӗрти (халӗ Ульяновск) чӑваш шкулӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ И. Я. Яковлев 1908 ҫулхи апрелӗн 11-мӗшӗнче [1]) Хусана Н. И. Ашмарин профессор патне янӑ ҫырӑвӗ пур. Ку ҫырура вӑл К. В. Иванов художествӑллӑ произведенисене чӑвашла куҫарас ӗҫе тытӑнни ҫинчен ҫырать. Ак ҫав ҫырури йӗр татӑк:

«Посылаю Вам 2 экз. только что напечатанной брошюры на чувашском языке «Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова и др. стихотворения М. Ю. Лермонтова». Покорнейше прошу Вас внимательно прочитать эту брошюру, а затем сообщить мне Ваше откровенное мнение о нашей новой попытке переводить на чувашский язык классические русские произведения. Это есть первый[2]) опыт... наших воспитанников К. Иванова...»

Ҫак документ тахҫанхи, историлӗ документ пулса тӑрать. Ун тӑрӑх К. В. Иванов чӑнах та художествӑллӑ произведенисене вырӑсларан чӑвашла куҫарма пуҫлаканни пулни ҫурришӗн те лайӑх курӑнса тӑрать ӗнтӗ. Вӑл ӗҫе К. В. Иванов пуҫлас тытӑнни пулни те кӗске вӑхӑтра пит ҫӳле ҫӗклесе янӑ. Хӑҫан та пулин ун ҫинчен хӑй вӑхӑтӗнче Н. И. Ашмарин профессор И. Я. Яковлева ответ панӑ хут ҫинче мӗнле ҫырни те тупӑнӗ-ха тен! Кучухнехи критиксем, сӑмахран В. Долгов (Хударсем), «Сунталӑн» 7-мӗш №-че «К. В Иванов—куҫару мастерӗ» тесе пит тӗрӗс, тивӗҫлӗ ҫыраҫҫӗ. Пӗр тӗлте В. Долгов (Хударсем) ҫапла калать «Пысӑк талантлӑ поэт[3]) Лермонтовӑн произведенийӗсене куҫарассинчен хӑраса тӑман, вӗсене вӑл пысӑк мастерлӑхпа куҫарнӑ. Тытӑннӑ пулсан, К. В. Иванов А. С. Пушкин произведенийӗсене те ҫавнашкалах ӑнӑҫлӑ куҫарнӑ пулӗччӗ. Мӗншӗн тесен вӑл ҫак аслӑ поэтсен протестне ӑнланнӑ, вӗсен прогрессивлӑ шухӑш-кӑмӑлӗсене чӑвашсен илемлӗ литературине кӗртесшӗн ҫунса ӗҫленӗ»,—тет.

В. Долгов (Хударсем) малалла ҫапла ҫырать: «...Лермонтовпа Кольцов произведенийӗсене куҫарасси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук пек туйӑнать. Уйрӑмӑнах, чӑваш чӗлхи пек чӗлхе ҫине, революциччен хи чӑваш чӗлхи ҫине куҫарма ҫӑмӑлах пулман ӗнтӗ. Лермонтов поэмине К. В. Иванов 1907 ҫулта, чӑвашсен литература чӗлхи пулман чухне, куҫарнине шута хурсан,—унӑн талантӗ ӗнтери вӑйлӑ пулни пушшех те уҫҫӑн курӑнса тӑрать»,—тет.

В. Долгов (Хударсем) статьинче К. В. Ивановӑн куҫару ӗҫе ҫинчен пур енчен те пит лайӑх ҫутатса панӑ. Лермонтов произведенийӗсене куҫарасси ҫинчен шутланӑ пулмалла ун чухне те, куҫарасса вара чӑнах та куҫарайман, куҫарсан та сӑвӑпа мар, прозӑпа куҫарма хӑтланнӑ.

Иле́р-ха 1906 ҫулта тухнӑ чӑвашла букваре. Унта М. Ю. Лермонтовӑн «Ангел» сӑввине кӗртнӗ. Анчах ӑна куҫаракан сӑвӑпа куҫарса нимӗ хал ҫитереймен, пултарайман, прозӑпа куҫарнӑ. Ятне те вырӑслах «Ангел» тесе хӑварнӑ. Акӑ вӑл статья:

«Ҫурҫӗр тӗлӗнче пӗлӗт тӑрӑх ангел вӗҫсе пынӑ, хӑй шӑппӑн ҫеҫ юрӑ юрлана, уйӑх та, ҫӑлтӑрсем те, пӗлӗтсем те ушкӑнӗ-ушкӑнӗпех ҫав ырӑ юрра итлесе тӑнӑ. Вӑл ҫылӑхсӑр чунсем рай пахчинчи йывӑҫсем айӗнче ырӑ курса савӑнса пурӑнни ҫинчен аслӑ турра-пӳлехе асӑнса юрлана, унӑн юрри чӑн кӑмӑлтан пулнӑ. Вӑл ҫак ҫут-тӗнчере хурланса пурӑнма пӗр ҫамрӑк чуна хӑй алли ҫинче йӑтса пынӑ. Унӑн тӗлӗнмелле юрри-сӑвви ҫамрӑк чун лӗш тӗнчери пӗлме хал ҫук ырӑ пурӑнӑҫшӑн ку тӗнчере нумайччен пӑшӑрханса пурӑннӑ. Вӑл пӗлӗт ҫинчи юрӑсене ҫӗр ҫинчи хурлӑхлӑ юрӑсемпе танлаштарма нимпе те пӗлеймен».

Начар мар, лайӑх куҫарнӑ. Ҫапах та, Лермонтовӑн пӗтӗм чӗре туйса тӑракан пысӑк илемлӗхӗ йӑлт ҫухалнӑ, петсе кайнӑ.

1907 ҫулта «Ангел» сӑвва куҫарма К. В. Иванов тытӑнать. Тытӑнать те, сӑвӑласах куҫарса парать. Ятне те «Пирӗшти» тесе куҫарать. Илӗр-ха ун куҫарнӑ сӑввине:

Пӗлӗт тӑрӑх ҫурҫӗрте
Вӗҫсе пынӑ пирӗшти,
Шӑппӑн юрӑ юрласа.
Уйӑх, ҫӑлтӑр, пӗлӗт те
Ырӑ юрра итленӗ
Ушкӑнӗпе пухӑнса.

Вӑл рай пахчи хӳттинче
Ҫылӑхсӑр чун савӑнса
Тӑни ҫинчен юрланӑ.
Аслӑ турра-пӳлӗхе
Хӑй юрринче асӑнса
Чӑн кӑмӑлтан мухтанӑ.

Асапланма, хурланма
Вӑл ҫамрӑк чун ҫӗр ҫине
Йӑтса пынӑ аллинче:
Асӑнмаллӑх юлнӑ ҫав
Чӗрӗ юррӑн сӑввисем
Ҫамрӑк чунӑн чӗринче.

Ку тӗнчере ҫамрӑк чун
Ҫӳлти ырӑ пурнӑҫшӑн
Пӑшӑрханнӑ нумайччен.
Анчах пӗлӗт юрри пек
Кунти юнчем юрӑсем
Ун чӗрине витеймен.

Мӗнле илемлӗ оригиналлӑ. унтан кая мар илемле куҫарса ҫырнӑ сӑввисем: пыв пек юхса пыраҫҫӗ сӑвӑсенчи сӑмахсем.

К. В. Иванов куҫарнӑ чух оригиналӑн вӑй-хӑватне пӗр чӗтӗм те чакарман, унӑн пуянлӑхне пӗр мӑскалта ҫухатмасӑр упраса хӑварма пӗлнӗ. К. В. Иванов куҫарнӑ Лермонтов, Некрасов, Кольцов, Майков сӑввисенче халӑхлах тапса тӑрать. Мӗншӗн тесен К. В. Иванов—чӑваш халӑхӗн тӳрӗ ывӑлӗ—тăван халăх чӗререн юратнӑ, тӑван халӑх творчествине витӗр пӗлнӗ, унпа усӑ курма пит ӑста пулнӑ. Ҫавӑнпа куҫару ӗҫӗнче те вӑл пит чаплӑ тӑлмач пулнӑ.

ЛУККА ЭРХИПӖ

---

[1]) Ҫакӑнтан ӗнтӗ К. В. Иванов куҫарнӑ М. Ю Лермонтов произведенийӗсем чӑвашла 1908 ҫулта апрельте пичетленсе тухни паллӑ пулса тӑрать.

[2]) Пӗрремӗш опыт, тет; апла пулсан, малалла татах куҫармалли плансем, ӗмӗтсем пулнӑ тесе шутлас пулать.

[3]) К. В. Иванов.